26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ДЕКАБРЬ
29
ЮНКУН
257(6494) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ĕççыннисен пурнăç условийĕсене лайăхлатассишĕн куллен тăрăшмалла

Вăрçă пирĕн пурнăçа чылай йывăрлăхсем кӳчĕ. Фронт интересĕсем совет çыннисене хуçалăхра та, пурнăçра та перекетлĕн пулма хушаççĕ. Çакна совет çыннисем лайăх ăнланаççĕ. Пирĕн совет çĕршывĕнчи ĕççыннисем çĕнтерӳ сехетне çывхартассишĕн нимĕн те шеллемеççĕ. Вĕсем, вăрçă йывăрлăхĕсене пăхмасăр, предприятисемпе учрежденисенче, колхоз уйхирĕсенче ывăнма пĕлмесĕр, пĕтĕм вăй-хăвата хурса ĕçлеççĕ, хăйсем перекетленĕ укçа-тенкĕне, тырпула тăван çĕршывăн вăйĕсене ӳстерме параççĕ.

Анчах та вăрçă условийĕсем ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн, вĕсен кулленхи ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн тăрăшас ĕçе сӳрĕклетмеллине пĕлтермеççĕ. Ун пек шутлани сиенлĕ пулать. Ун пек шутлама айван çынсемпе бюрократсем çеç пултараççĕ. Пачах урăхла, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене ăнăçлăн çĕнтерсе пырас тесен, ĕççыннисен пурнăç условийĕсене лайăхлатассишĕн нихçанхинчен те ытларах тăрăшмалла. Пуриншĕн те паллă, тылри ĕççыннисем çĕнтерӳ хĕçпăшалне тупаççĕ. Вĕсем валли ĕçлеме тата пурăнма условисем туса пани çĕнтерӳ сехетне çывхартма пулăшать.

Совет ĕççыннийĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатассишĕн большевиксен партипе совет правительстви куллен тимлĕн тăрăшаççĕ. Халĕ, çĕршыври пĕтĕм резервсемпе вăйсене нимĕç захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкма мобилизациленĕ вăхăтра та, пирĕн государство ĕççыннисен пурнăç условийĕсене лайăхлатнă çĕре, фронтовиксен çемьисене тата вăрçăран аманса килнĕ çынсене пулăшнă çĕре çулсерен миллион-миллионĕпе укçа-тенкĕ расходлать. Пирĕн çĕршывра ĕççыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе нумай тĕрлĕ учрежденисемпе организацисем тата предприятисем ĕçлеççĕ. Партипе советăн выранти организацийĕсен хисеплĕ задачи — çав учрежденисемпе предприятисен ĕçне татăклăнах çĕклесси пулать.

Çапах та партипе советăн вырăнсенчи хăшпĕр организацийĕсем тата ĕççыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисемпе предприятисен руководителĕсем хăйсен çаварăнăçусăрлăхне, тимсĕрлĕхне вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисемпе витме пикенеççĕ.

Промысла кооперации артелĕсемпе районсенчи промышленность предприятийĕсен аллинче хуçалăхра куллен кирлĕ таварсем туса кăларма пур майсем те пур. Супăнь, спичка, чашăк-тирĕк, кашăк-çăпала, витре тата ытти япаласем кашни артельте, предприятире туса кăларма пулать. Анчах вĕсем çителĕклĕ таран çук-ха. Мĕн вара вăрçă чарать-и çавсене тума? Çук, пĕтĕм сăлтав кунта промысла кооперации союзĕсен руководителĕсем тата промысла кооперацин Управленийĕн республикăри уполномоченнăйĕ çаварăнăçусăр ĕçленинче. Хăшпĕр артельсенче супăнь, спичка тата ытти çавăн пек кирлĕ япаласене туса кăларассине организациленĕ. Вĕсен опычĕпе ытти артельсенче усă курмаççĕ.

Хуласенче пурăнакан ĕççыннисем кăçал предприятисемпе учрежденисем валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе начар мар ĕçлерĕç. Анчах та халĕ Канаш хулинчи чылай шкулсемпе яслĕсем тата Шупашкарти чылай учрежденисемпе предприятисем вутăсăр лараççĕ. Хатĕрленĕ вутта турттарса тухма вăрçă чăрмантарать-и мĕн? Çук, асăннă хуласенчи учрежденисемпе предприятисем вутăсăр ларни Канашпа Шупашкар хула совечĕсен исполкомĕсем çав ĕçе вăхăтра организацилеменнинчен килнĕ.

Хулари мунчасенче, столовăйсемпе мастерскойсенче, магазинсенче кирлĕ пек тасалăх, большевикла йĕркелĕх çук. Вĕсенче çирĕп йĕркелĕх тума вăрçă чăрмантарать-и мĕн? Çук, çав учрежденисенче йĕркелĕх пулманни вăл работниксем хушшинче ответсăрлăх саралнинчен килет. Шупашкар хулинчи мунча хăйĕн производство планне тултармасть. Апла пулин те мунча директорĕ работниксене тасалăхшăн, йĕркелĕхшĕн кĕрешме мобилизацилес вырăнне план ӳстерсе панă тесе сӳпĕлтетсе ларать. Шупашкар хула совечĕн суту-илӳ пайĕнчи тата Чебторгри работниксем столовăйсемпе магазинсенче çынсем çине чунсăррăн пăхнине хирĕç кĕрешмеççĕ. Çакна асра тытас пулать: суту-илӳ ĕçĕнчи, коммуналлă предприятисенчи работниксем вĕсем государство ĕçне тăваççĕ. Çавăнпа та вĕсен хăйсен тивĕçне тӳррĕн те чыслăн пурнăçа кĕртсе пымалла.

Магазинсенче, столовăйсенче, ача яслисенче, медицинăпа культура учрежденийĕсенче, атă-пушмак тата тумтирсем юсакан мастерскойсенче, общежитисенче ĕçлекенсем пурте пирĕн государствăра хисеплĕ те ответлă ĕçе пурнăçа кĕртеççĕ. Çавăнпа та вĕсен чăннипех те вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ĕçлемелле.

Партипе совет организацийĕсен ĕççыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисемпе предприятисен ĕçĕсене куллен тĕрĕслесе тăмалла, вĕсене кулленхи ĕçре пулăшса пымалла. Уйрăмах ĕççыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе ĕçлекен организацисене шанчăклă та пултаруллă çынсене уйăрса лартасси çине тимлĕн çаварăнса пăхмалла. Вĕсене кулленхи ĕçре пулăшса, вĕрентсе пымалла.

Сталин юлташ — çынсемшĕн тăрăшасси большевикăн кулленхи тивĕçĕ пулса тăрать, тесе вĕрентет. Партипе совет организацийĕсен пĕтĕм ĕçĕнче çынсемшĕн сталинла тăрăшасси тĕп вырăнта пулмалла.

Çĕнĕ çул умĕн

Çулталăкри плана 150 процент тултарнă

ЭЛЕК. (Хамăр корр.). Райпромкомбинат коллективĕ 1943 çулта начар мар ĕçлерĕ. Вăл, производство планне кашни уйăхрах иртерсе тултарса пырса, çулталăкри плана ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне пурнăçларĕ, юлашки икĕ уйăх хушшинче вăл çĕршыва планран ирттерсе темиçе вунă пин тенкĕлĕх продукци пачĕ. Урăхла каласан, вăл хăйне панă кăçалхи задание 150 процентран кая мар тултарать.

Комбинат коллективĕ, пуринчен ытла, ĕççыннисене куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçлет. Ку енĕпе вăл хăйĕн планне 160 процент ытла тултарчĕ.

Комбинатра çĕнĕ йышши продукцисем кăларас ĕçе организациленĕ. Сăмахран, çĕнĕ производствăсем 404 ала, 220 метр пир, 115 килограмм атă пăти, 1450 кашăк-çăпала туса кăларнă. Нумаях пулмасть тата çăматă йăвалакан производство ĕçлеме тытăнчĕ.

Çитес çулшăн аш-какай параççĕ

Октябрьски районри «Культура» колхоз членĕсем государствăна çитес çулшăн аш-какай параççĕ. Колхозниксем хăйсем йышăннине пурнăçласах пыраççĕ. Декабрь уйăхĕнче кăна 960 килограмм какай панă. Халь государствăна çу парас ĕç пуçланчĕ.

«Культура» колхоз членĕсен пуçаравне ырласа, ялсоветри «Молния» колхоз членĕсем те государствăна çитес çулшăн 700 килограмм какай пачĕç.

И. АНДРЕЕВ.

Колхозниксен кучченеçĕсем

ВĂРМАР, декабрĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). „Маяк“, „Большевик“, „15 съезд ВКП(б)“ колхозсен членĕсем çĕнĕ çул ячĕпе пĕр госпитальри боецсем валли кучченеçсем хатĕрлеççĕ. Вĕсем 5 пăт сысна какайĕ, 207 çăмарта, 50 килограмм кĕрпе хатĕрленĕ те ĕнтĕ.

В. М. Молотов юлташ Австрали посланникне Д. Малоней господина йышăнни

Декабрĕн 27-мĕшĕнче Ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Австрали Союзĕн ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй Посланникне тата Полномочнăй Министрне Д. Малоней господина йышăннă, ăна вăл СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне хăйĕн верительнăй грамотисене парас пирки каласма йышăннă.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председательне Иосиф Виссарионович Сталин юлташа

Сире, Сталин юлташ, çакăн çинчен пĕлтеретпĕр: «Магнитострой» трестăн строителĕсен коллективĕ Магнитогорскри Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ металлурги комбиначĕн улттăмĕш питĕ хăватлă домна кăмакине туса пĕтерне, ăна металлургсем ĕçлеттерме пуçланă ĕнтĕ. Çак кăмака вăрçă пуçланнăранпа тунă иккĕмĕш домна кăмаки пулса тăрать.

1943 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче çак çĕнĕ кăмакара пуçласа чугун шăратнă.

Механизмсене ĕçлеттерсе пăхас, кăмакана чĕртсе ярас тата унта пуçласа чугун шăратса илес ĕçсем лайăх иртрĕç, вĕсем строительствăпа монтаж ĕçĕсене питĕ лайăх тунине кăтартса пачĕç.

Совет Союзĕнчи чи пысăк кăмака пулса тăракан çак улттăмĕш кăмакана домна производствинчи техникăн чи çĕнĕ ӳсĕмĕсене шута илсе тунă, ăна чи кĕске срокра туса пĕтерне, пĕтĕмпех совет материалĕсенчен тунă тата оборудованине те Совет Союзĕнчех тунă; çав оборудованин чылай пысăк пайне Магнитогорски металлурги комбиначĕн цехĕсенче тата юйкăрах туса хатĕрленĕ.

Сире, хаклă юаш Сталин, çакна шантарса калатпăр: Сталинла Магниткăн строителĕсемпе металлургĕсем, Хĕрлĕ Çарапаттăр çĕнтерĕвĕсемпе тата Эсирылри работниксене пысăк вырăн хурса хакланипе хавхаланнăскерсем, хура металлургин вăйне ӳстер пырас тата унпа усă курас тĕлĕшпе Оборонăн Государственный Комитечĕ паракан çĕнĕ заданисене пурнăçа кĕртмешкĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçĕç.

Сталинла Магниткăн строителĕсемпе металлургсен митингĕ хушнипе çаксем алă пуснă:

ДЫМШИЦ — «Магнитострой» трестăн управляющийĕ.

НОСОВ — Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ металлурги комбиначĕн директорĕ.

ГУРЕВИЧ — «Магнитострой» трестăн главнăй инженерĕ.

ФОКИН — ВКП(б) Магнитогорск горкомĕн секретарĕ.

ОСМЕР — ВКП(б) Центральный Комитечĕн строительствăри парторгĕ.

ПЕТРУША — ВКП(б) Центральный Комитечĕн заводри парторгĕ.

Магнитогорскри комбинатăн улттăмĕш домни пуçласа чугун шăратса панă

МАГНИТОГОРСК, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 25-мĕшĕнче Магнитогорскри Сталин ячĕпе тăракан комбинатăн улттăмĕш домни пуçласа чугун шăратса панă

* * *

Улттăмĕш домна — Совет Союзĕнчи чи хăватлă домна. Вăл революциччен Российăра Уралти мĕнпур предприятисем пĕрле шăратса панă чухлех чугун шăратса парать. Магнитогорецсем çак çĕнĕ кăмакана калама çук кĕске срокра — 8 уйăх хушшинчех туса пĕтерне.

Кăмакана Гипромез проекчĕ тăрăх тунă. Вăл ытти кăмакасенчен лайăхрах.

Кăмакапа пĕрлех тата бункер эстакади, чугуна шлака турттарса тухмалли чугун çул тата ытти сооруженисем те ĕçлеме пуçланă.

Строительствăра 5 пин рабочи ĕçленĕ.

Улттăмĕш домнăна йышăнма тунă правительство комиссийĕн председателĕ И. П. Бадин строительсемпе монтажниксен ĕçне пысăк хак панă.

Улттăмĕш домнăна тăвас ĕçе комсомол шефа илнĕ пулнă. Çавăнпа çав домнăна Комсомольски тесе ят панă. (ТАСС).

Александр Сергеевич Яковлева инженерипе авиаци службин генерал-лейтенанчĕн званине парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Свечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

Александр Сергеевич Яковлева Оборонăн Государственный Комитечĕн 1942 çулхи январĕн 22-мĕшĕнчи постановленийĕ тăрăх тунă çар званине — инженерипе авиаци службин генерал-лейтенанчĕн званине парас.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1943-мĕш çулхи декабрĕн 27-мĕшĕ.

Хĕрлĕ Çарăн офицерĕсене тата сержанчĕсене Совет Союз Геройĕн званине пани

Днепр шывĕ урлă ăнăçлăн каçнăшăн тата çавăн чухне хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн 1943-мĕш çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, офицерсемпе сержантсен ушкăнне, Ленин орденĕпе тата «Золотая Звезда» медальпе наградăласа, Совет Союз Геройĕн званине панă.

Совет Союз Геройĕн званине мĕнпурĕ 109 офицерпа сержанта панă. (ТАСС).

Хĕрлĕ Çар артиллерийĕн офицерĕсене, сержанчĕсене тата рядовой составне Совет Союз Геройĕн званине пани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçланăшăн, Днепр шывĕ урлă каçнăшăн тата çав вăхăтра хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн декабрĕн 24-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çар артиллерийĕн офицерĕсене, сержанчĕсене тата рядовойĕсене, Ленин орденĕпе тата «Золотая Звезда» медальпе наградăласа, Совет Союз Геройĕн званине панă.

Совет Союз Геройĕн званине пурĕ 110 офицера, сержанта тата рядовоя панă. (ТАСС).

Библиотекăна хаклă йышши кĕнекесем таварса панă

Государствăн Харьковри центральнăй научнăй библиотекинче авалхи алçырăвĕсемпе кĕнекесен питĕ чаплă отделĕ пулнă.

Гитлерла захватчиксенчен çав историллĕ пуянлăха çăлса хăварас тесе, отдел заведующийĕ пулса ĕçлекен 53 çулхи Антонина Борщ чи хаклă кĕнекесемпе алçырăвĕсене тимĕр арчана чикнĕ те çурт пусми айне чавса хунă. Çак пуянлăх çĕр айĕнче икĕ çул хушши выртнă. Çав арчана нумаях пулмасть чавса кăларса усçнă. Унта мĕн хуни пурте тĕрĕс-тĕкĕлех сыхланса юлнă. Унта Итали архитекторĕн Піранезин авалхи альбомĕсем (ун образецĕсем Луврта кăна сыхланса юлнă), Аристотелĕн «Пĕлĕт çинчен» конспекчĕсем, Эвклидăн «Пуçламĕшĕ» ятлă трактачĕ, Коперникăн, Галилейăн, Ломоносовăн, Лобачевскин кĕнекисен малтанхи кăларăмĕсем тата Наполеон çырăвĕсем сыхланса юлнă.

Сыхланса юлнă кенекесем хушшинче Карл Маркс «Капиталĕн» пĕрремĕш кăларăмĕ, В. И. Ленинăн «Ялти чухăнсем патне» ятлă 1903 çулта Женевăра пичетлесе кăларнă кĕнеки, И. В. Сталинăн «Партири хирĕçӳсем пирки» ятлă кĕнекин пĕрремĕшпе иккĕмĕш кăларăмĕсем пур. (ТАСС).

Вылявсен тиражĕ

Мускавра Государствăн виççĕмĕш пилĕкçуллăх (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) заемĕн 8-мĕш тиражĕн выляввĕ пулса иртнĕ.

Тиражра 131.222.000 тенкĕлĕх 840.000 выляв пулнă. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 27-мĕшĕнче ВИТЕБСК енче пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, 30 ял ытла тытса илнĕ, çав шутра — НОВОСЕЛКИ, ДВОРИЩЕ, ХУДЕНИ, СИЛКИ, ШУХВОСТЫ, ТРИНИВКИ, ЛУЩИХА, ТЯКОВА ятлă ялсем. Пирĕн çарсем ВИТЕБСКПА ПОЛОЦК хушшинчи чугун çула татнă.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлăн наступлени туса пынă, Житомир облаçĕнчи АНДРУШЕВКА тата ВЧЕРАЙШЕ ятлă район центрĕсене тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă, вĕсем хушшинче — БОРЩЕВ, ВЕРЛООК, КИЧКИРЫ, ГЛИНИЦА, ЮРОВКА, ИВАНОВКА, ЛЕНИНО, МИНИНЫ, ГОРОДЬСК, РАДОВКА, ШАХВОРОСТИВКА, ИВНИЦА, СТЕПОК, ЯРОПОВИЧИ, ВОЛИЦА, ЗАРУБИНЦЫ, ЗАБАРА, МИНЬКОВЦЫ, ЛЕБЕДИНЦЫ, БРОВКИ, ХОРЛЕЕВКА, МАКАРОВКА, АНДРУШКИ, ПАРИЦСЫ, САВЕРЦЫ, ПОЧУЙКИ, КОЖАНКА, ТРИЛЕСЫ, НОВОСЕЛИЦА, ЯХНЫ ятлă ялсене тата ЯРОПОВИЧИ, СТЕПОК, ТРИЛЕСЫ, КОЖАНКА, ПАРИЦСЫ, БРОВКИ, АНДРУШЕВКА ятлă чугун çул станцийĕсене.

КИРОВОГРАДРАН çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене сирсе янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Декабрĕн 26-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 95 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă.

☆ ☆ ☆

Витебск енче пирĕн çарсем çапăçса малалла куçнă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла тытса илнĕ. Витебскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсем резервсем илсе пынă та çирĕм хут та ытла контратака тунă. Хаяр çапăçусенче халăх пурăнакан хăшпĕр пунктсем темиçе хут та алăран алла куçнă. Совет чăçĕсем, лайăх маневрсем туса, тăшмана сирсе янă, унтан, хăвăрт малалла кайса, Витебскпа Полоцк хушшинчи чугун çула татнă. Çав участокра кун каçиччен нимĕçсен 2.000 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Витебскран çурçĕртерехре, хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем хушăри рубежра çирĕпленсе ларнă тăшман хирĕç тăнине сире-сире ярса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Нимĕçсен 19 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Нимĕçсенчен 10 тупă, 14 миномет, 40 пулемет тата боеприпассен темиçе складне тытса илнĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Вирлĕн малалла куçса, совет боецĕсем Житомир облаçĕнчи Андрушевка тата Вчерайше ятлă район центрĕсене тытса илнĕ, унсăр пуçне 100 ял ытла тата темиçе чугун çул станцине тытса илнĕ. Каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса тата вăл хирĕç тăнă вырăнсене пĕтерсе пырса, пирĕн çарсем хĕçпăшал, боеприпассем тата çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ. Нимĕçсем питĕ пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Андрушевка ятлă район центрĕпе чугун çул станцине тытса илнĕ чухне кăна пирĕн пехотинецсемпе танкистсем гитлеровецсене икĕ батальона çити вĕлерсе пĕтерне, «Тигр» йышши 7 танк, хăй тĕллĕн çӳрекен 6 тупă, 20 хир туппи, 90 пулемет, боеприпассен 2 складне тата тумтирсем хунă пысăк склада тытса илнĕ. Пĕр чăçăн боецĕсем, сасартăк пырса çапса, нимĕç полкĕн штабне аркатса тăкнă. Васкаса чакнипе гитлеровецсем юсавлă 8 танк, 4 артиллери батарейи тата япала складне пăрахса хăварнă. Тепĕр участокра тăшман мотопехотин 3 полкĕ тата темиçе вунă танкĕ пирĕн наступлени туса пыракан çарсене вăйлăн хирĕç тăнă. Совет чăçĕсем тăшман группировкин флангне пырса тухнă та, вирлĕн пыра-пыра çапса, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă. Çав çапăçура 40 танк ытла пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен 2.000 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтерне. Нумай çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Кировоград хулинчен çурçĕртерехре тăшман танкĕсемпе пехоти пирĕн позицисене атакăланă. Хаяр çапăçура пирĕн çарсем гитлеровецсене питĕ пысăк çухату тӳстерне, гитлеровецсен вара каялла чакмалла пулнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 600 виллине таран выртса юлнă. Пирĕн артиллеристсемпе бронебойщиксем тăшманăн 9 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен 4 туппине персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра пĕр чăçăн артиллерисчĕсемпе минометчикĕсем нимĕç пехоти пухăнса тăнă вырăна вăйлăн пеме тытăннă. Гитлеровецсене пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Литовецсен «Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн» ятлă партизанла отрячĕ нимĕçсен фронт патнелле каякан 2 çар эшелонне сирпĕнтернĕ. Крушение пула пĕр паровоз тата çар хатĕрĕсем тиенĕ 10 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Литовец партизанĕсен тепĕр отрячĕ чугун çул станцине кĕрсе кайнă та нимĕçсен çар пурлăхĕ хунă склачĕсене вут тĕртсе янă. Декабрĕн 10-мĕш кунĕнче партизансем пĕр яла саратакан нимĕçсене тапăннă. Совет патриочĕсем 34 гитлеровеца вĕлернĕ. Нимĕçсем саратса пухнă пурлăха партизансем халăха салатса панă.

* * *

Нимĕçсен 75-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 172-мĕш полкăн штаб ротинчен тыткăна лекнĕ салтак шофер Вальтер Зосимюллер çапла каласа панă: «Вырăссем пирĕн дивизие питĕ пысăк çухату тӳстерчĕç. Мана салтаксемпе офицерсен çĕршер виллине турттарса кайма тивекчĕ. Вĕсене вара васкаса ăçта май килчĕ çавăнта варса хуратчĕç. 172-мĕшпе 202-мĕш полксенче 300-шер салтак çеç тăрса юлчĕ, 222-мĕш полка пĕтĕмпех аркатса тăкрĕç. Артиллери полкĕнче пĕр батарея çеç тăрса юлчĕ. Ноябрь уйăхĕнче дивизи чăçĕсене çĕнĕрен çынсем хушса пачĕç. Пурте пăртак та пулин канăпăр-ха тесе шанса тăратчĕç, анчах та канмалла пулмарĕ. Вырăссем пире кĕтмен çĕртен тата хăвăрт тепĕр хут пырса çапрĕç. Пурте çав тери хăраса ӳкрĕç. Штаб ротин командирĕ Тюнец обер-лейтенант, пистолечĕпе сулкаласа, ман машина çине сиксе ларчĕ те мĕн май килнĕ таран хăвăртрах кайма хушрĕ. Çул тăрăх салтаксемпе офицерсем чупатчĕç. Вĕсем салтаксене лартман шоферсене пăшалпа переччĕç. Мана обер-лейтенант тем пек хистерĕ пулин те, эпир нумай аякка каяймарăмăр. Вырăссем йĕрлетаврах çавăрса илнĕ. Тюнец тарма хăтланчĕ, анчах ăна персе вĕлерчĕç. Эпĕ вара алла тăратрăм та тыткăна парăнтăм».

* * *

Аяларах нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Калинин облаçĕнчи Куксиха ялĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Пирĕн ялтан чакса кайнă чухне нимĕç захватчикĕсем пирĕн ялти мĕнпур çынсене вĕлерсе пĕтерме шухăш тытрĕç. Гитлеровецсем танксемпе ял тăрăх çӳресе, халăха пулеметсемпе пере-пере вĕлерчĕç. Çав кун фашистла пуçкасакансем Анастасия Жгуна тата унăн виçĕ çамрăк ачине, Пелагея Большаченкона, Федор Большаченкона, Федосия Захарченкона тата ытти çитĕннĕ çынсемпе ачасене те вĕлерчĕç. Ялти ытти çынсене Хĕрлĕ Çар боецĕсем çăлса хăварчĕç, вĕсем фашистсен вăрăхурахĕсене питĕ хăвăрт хăваласа ячĕç».

Акт çине ялти çак çынсем алă пуснă: М. Захарченко, Е. Анютина, Д. Захарченко, Л. Лещенко, Ф. Захарченко, Ф. Лещенко тата ыттисем те.

Йĕлтĕрлĕ походсем ирттереççĕ

Канашри Добролюбов ячĕпе тăракан педагогика училищинче кăçал «Смена» ятлă физкультура коллективĕ (председателĕ Новикова) организацилерĕç. Çавăнтанпа училищĕре физкультура ĕçĕ чылай лайăхланчĕ. Училищĕре пĕтĕмпе 110 йĕлтĕр. Вĕсем пурте юсавлă. Вĕренекенсем вăл йĕлтĕрсемпе туллин усă кураççĕ. Халĕ, колхоз çамрăкĕсен Пĕтĕм Союзри йĕлтĕрлĕ кросне хатĕрленнĕ май, кунсеренех тренировкăсем пулса иртеççĕ. Канмалли кунсенче походсем пулаççĕ. Иртнĕ канмалли кун 20 километра кайса килчĕç. Унта 50 ача хутшăнчĕ. Вĕсенчен уйрăмăнах Кокнаева, Свешникова тата Григорьев юлташсем йĕлтĕрпе лайăх çӳреме вĕренсе çитнине кăтартрĕç, паларгнă тĕле ыттисенчен малтан çитрĕç.

И. МАКСИМОВ.

Суракине большевикла хатӗрленер

Тракторсене юсас ӗç аначлан пырать

ПЕПРЕÇ, декабрӗн 28-мӗшӗ. (Телефонпа). МТС-ри рабочисемпе служащисем хушшинче Сталин юлташăн Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă историллĕ докладне вӗреннӗ хыççăн бригадăсем тракторсене юсас пирки конкретнăй обязательствăсем илнӗччӗ. Çак обязательствăсене тракторситсем тата тракторсене юсакан рабочисемпе техниксем чыслăн пурнăçлас пыраççĕ.

Тăваттăмӗш кварталта паянхи кун тĕлне план тăрăх 17 трактор юсамаллачĕ, анчах социализмлă ăмăртăва анлăн çавса янине пула 28 трактор юсаса пӗтернӗ.

Ырăмăнах çак МТС-ри 7-мӗш бригада (бригадирӗ П. Мальцев юлташ) лайăх ӗçлет. Çак бригада 2 трактор юсанă вырăнне 4 трактор юсанă, вӗсен сумне кăкармалли инвентаре тата комбайн моторне юсаса хунă. Вӗсене пурне те лайăх юсанă. Пултаруллă ӗçленӗшĕн тата юсас ӗçре лайăх тӗслӗхсем кăтартнăшăн 7-мӗш бригада МТС-ăн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗçлӗ пулчӗ. МТС-ри трактор бригадисен хушшинче тата Максимов юлташ ертсе пыракан 5-мӗш бригадăпа Яковлев юлташ ертсе пыракан 1-мӗш бригада та аван ӗçлеççӗ. Вӗсем икшер трактор вырăнне 3-шер трактор юсанă.

Тăван Хӗрлӗ Çар Отечественнăй аслă вăрçăн фрончӗсенче çӗнтерӳсем тунипе савăнса, МТС-ри трактористсем тата тракторсене юсас ӗçре ӗçлекен рабочисемпе техниксем юсамалли тата 10 трактора январӗн 20-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпех юсаса пӗтерме пулчӗç. Халь çак обязательствăна ăнăçлăн пурнăçлас пирки хӗрӳ ӗç пырать.

Г. ИВАНОВ—МТС директорӗ.

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем 1943 ÇУЛХИ IV-мӗш КВАРТАЛТА ТРАКТОРСЕМ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА ДЕКАБРӖН 25-мӗшӗ ТӖЛНЕ МЕН ЧУХЛӖ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

МТС-сем	Миçе процент тултарнă.
Пӗпреç	164,7
Вăрнар	150,0
Шупашкар	150,0
Красноармейски	150,0
Комсомольски	130,0
Канаш	116,6
Ишлей	113,3
Элӗк	112,5
Куславкка	108,8
Сӗнтӗр	106,2
Чкаловски	106,2
Елчӗк	105,8
Шăхасан	100,0
Сӗрпӳ	100,0
Сӗнтӗрвăрри	100,0
Етӗрне	83,3
Вăрмар	82,3
Шăмăршă	76,9
Первомайски	63,6
Кувакино	62,8
Хӗрлӗ Чутай	60,0
Пăрачкав	57,1
Тăвай	50,0
Çӗмӗрле	40,0
Улатăр	33,3

Машинăсем юр айӗнче

КАЛИНИНО. Шнакассинчи «Броневик» колхозăн тыр выракан икӗ машини тата тепӗр сеялки итем çинче юр айӗнче лараççӗ. Çак паха машинăсем юр айӗнче тутăхса пăсăлаççӗ, анчах та вӗсене пухса типӗ сарайне кӗртсе лартас пирки никам та нимӗн те тумасть.

Ф. НИКИФОРОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇӖ

Коммунистсен пухăвӗ завод ӗçӗсем çинчен сӳтсе-яврӗ

Канашри вагонсем юсакан заводра коммунистсен пӗтӗмӗшле пухăвӗ пулса иртрӗ. Кун йӗркипе пӗр ыйту—заводăн ноябрь декабрь уйăхӗсенчи ӗçӗсем ӗнчен пулчӗ. Çак ыйтупа пухх уçă начальникӗн В. Поздняков юлташ доклад те пачӗ.

Докладчик тата пенире тухса калакансем завод ӗçне тӗплӗн çутатса пачӗç, çитменлӗхсене çивӗччӗн критиклерӗç.

Вагонсем юсакан вод коллективӗ пӗр хутчен мар те хăйӗн пуларулăхне кăтартса пăнă. Вăл темиçе хутчен Çулйӗр НКӗн Комиссарӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавне илме тивӗçлӗ пулнă. Ноябрь уйăхӗнчи плана тултарса çитереймен Декабрь уйăхӗнчи ӗçсемпе те мухманалли çук.

Завод кăна юлма тăни, чи малтанах, завод ӗçне ерса паракан производствăсене—электростанцине транспорт отделĕнĕ тата тепӗлӗн хатӗрлесе çитерменнине пула тата материалӗсем тăратакан отдел начар ӗçленнине илнӗ. Электростанци руководителӗ Петухов юлташ электростанцине лайăх ӗçлетерес вырăнне тӗрлӗ салтавсене витӗнме тăрăшать. Вăчас-часах вут ваклакан оборудованием ӗçлемен пирки ӳпкелешет. Анчах та унта большевикла йӗркелӗтăвас тесе нимӗнле мерă та йышăнин. Транспорт отделӗн начальникӗ Ястребов юлташ кран ӗçне кирлӗ ек организацилемен. Завода техника материалӗсем тăратас тӗлӗпе ӗçлекен отдел, йывăç материалсен фончӗсем пур пулин те, вӗне кирлӗ таран кӳрсе килмен.

Заводра пур цехсем отделсенче те тенӗ пекех ӗç дисциплини сӳрӗкленни сисӗнет. Сăмахран, ноябрь уйăхӗнче утилизаци цехӗнче ӗç дисциплинине пăснисем 2 хут пулнă. Дмитриев юлташ начальник пулса ӗçлекен цехра та çавăн евӗрлех. Ӗç дисциплинине çирӗплетес тӗлӗшпе коммунальнăй отдел начальникӗ Корнейка, завком председателӗ Мокеенко юлташсем çителӗксӗр ӗçлеççӗ. Вӗсем рабочисемпе пурăнакан общежитисенче культуралла-массăллă ӗçе, тасалăхшăн кӗрешессипе организацилемен. Пуçламăш парторганизацисем те рабочисемпе служащисене тата инженерла-техникăла работниксен ыйтăвӗсене тивӗçтерессишӗн тивӗçлипе ӗçлемеççӗ-ха.

Пухура рационализаципе изобретени ӗçне кирлӗ пек йӗркелеменнине палăртрӗç. Цехсенчи пуçламăш парторганизацисем тата хăшпӗр комунистсем техникăлла шухăшсене ӳстерес пирки тӗлӗшпе тимлӗн ӗçлемеççӗ. Çапла, темпӗр цехӗнчи парторг Третяк юлташ рабочисемпе калаçмасть, вӗсене кулленхи ӗçре пулăшса пымасть.

Пухура рабочисемпе работниксен пурнăçӗпа культура ыйтăвӗсене тивӗçтерес тӗлӗшпе начар ӗçлени çинчен те каларӗç. Столовăйӗнче ӗçе лайăх йӗркелемен пирки рабочисен апат парасса кӗтсе ексем тăмалла лараççӗ.

Парти пухăвӗ хăйӗн решенийӗнче электростанци, транспорт тата техника материалӗсем тăратас тӗлӗшпе ӗçлекен отделсен руководителӗсене хăйсен участокӗсенчи ӗçе тӗпренех лайăхлатма хушса хăварчӗ. Пуху çав руководительсене ӗçе кӗске вăхăтрах йӗркелемесен парти енӗпе ответ тыттарасси пирки асăрхаттарчӗ.

Пуху ӗç тухăçлăхне ӳстерес, ӗç дисциплинине çирӗплетес тата политикăллă-массăллă ӗçе анлăн сарса пырас тӗлӗшпе чылай мероприятисем палăртса хăварчӗ.

Пухура ВКП(б) Обком секретарӗн оборона промышленность енӗпе ӗçлекен заместителӗ Крылов тата ВКП(б) Канаш горкомӗн секретарӗ Никитин юлташсем пулчӗç.

Комсомолă МТС-сенчи пуçламӗш организаци секретарӗсен канашлăвӗ

ВЛКСМ Чăваш Обкомӗнче комсомолăн МТС-сенчи пуçламӗш организаци секретарӗсен канашлăвӗ пулса иртрӗ. Канашлу тракторсене юсас тата механизатора кадрсем хатӗрлес тӗлӗшпе комсомолăн МТС-сенчи организацийӗсем умӗнче тăракан задачăсем çинчеВЛКСМ Обком секретарӗн П. Михайлов юлташăн докладне итлерӗ.

Доклад хыççăн прение Бочков (Канашри ялхуçалăх ӗçнчи механизаторсен шкулӗнчи Ц ВЛКСМ комсоргӗ), Курина (Вăрнар МТС-ӗнчен), Степанова (Ишлей МТС-ӗнчен) Иванова (Вăрмар МТС-ӗнчен), Арефьева (Çӗмӗрле МТС-ӗнчен), Семенов (Красноармейски МТС-ран), Яковлева (Чкаловски МТС-ран) юлташсем тухса каларӗç.

Докладчик тата прение тухса калакансем те комсомолăн МТС-сенчи организацийӗсем тракторсене юсас тата механизаторла кадрсем хатӗрлес тӗлӗшпе çителӗксӗр ӗçленине палăртрӗç. Вӗсем тракторсене срокчен юсаса пӗтерес ӗçе çамрăк трактористсене мобилизацилемен. Çак ыйтăва комсомол пухăвӗсенче те сӳтсе-явман. Чылай МТС-сенче социализмлă ăмăртăва сарас тӗлӗшпе сӳрӗк ӗçлеççӗ. Çавăн пекех комсомол организацийӗсем МТС-ри рабочисен пурнăçпа йăла условийӗсемпе пачах интересленмеççӗ. Трактористсен курсӗсенче çамрăксем вӗренеççӗ пулин те, комсомолăн МТС-сенчи хăшпӗр организацийӗсем вӗсен ӗçӗсене хутшăнмаççӗ, çитменлӗхсене пӗтерес тата çамрăксене политикăлла воспитани парас тӗлӗшпе сӳрӗк ӗçлеççӗ.

Канашлу комсомолăн МТС-сенчи организацийӗсен ӗçне лайăхлатас тӗлӗшпе тума кирлӗ мероприятисем палăртса хăварчӗ.

Ют çӗршывсенче

Президент Рузвельт янă послани

ЛОНДОН, декабрӗн 24-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви Рузвельтăн раштав кунӗ янă послани çинчен пӗлтерет, ăна Нью-Йоркри Гайд-паркран радиопа панă. «Эпӗ,—тенӗ Рузвельт çав посланире,—Вăтаçӗр тинӗс районне тăрăх нумай вăхăт хушши çӳрене хыççăн халь çеç таврăнтăм. Çавăн чухне эпӗ Россия хушшинчен паттăр ҫитрӗм. Эпӗ Англи, Росси тата Китай руководителӗсемпе пӗрле халăхсен хăтăри вăрçă ыйтăвӗсем пирки канашларăм, уйрăмăн илсе кăтартсан—пирӗн тăшмансене хирӗç ăнăçлăн наступлени тумалли плансем çинчен калаçрăм. Çав наступлени час пуçланмалла тата вăл çӗр тăмăрӗн тӗрлӗ вырăнӗсенче пуçланса каймалла. Рузвельт çапла каланă: Пӗрлешӳллӗ Штатсен хăйсен хӗçпăшаллă вăйӗсем кăна 10 миллион çынна çитнӗ пӗрлештерес тăраççӗ, вӗсенчен 3.800 пин çын ют çӗршывсенче тăраççӗ.

Кăçал тӗнче сине çитес умӗн эпӗ çапла калама пултаратăп,—тенӗ малалла Рузвельт:—хирек мӗн пулсан та, мӗн чухлӗ жертвăсем тӳсмелле пулсан те, эпир хамăран вăрçăри тӗллевсене пурнăçлас тӗлӗшпе çине тăсса ҫине пултаратăр, «çӗр çинче мир тата этемсем хушши ыраш тăвса ярас тӗлӗшпе пурнăçа пултаратăпăр» тăрăттăр». Юлашки темисе хушшинче,—тенӗ Рузвельт,—вӗсем эпир халиччен пӗлнӗ е çак хăрушă вăхăтра шанма пултарнă ӗçсенчен чи лайăххисем пулса тăчӗç.

Чаплă ӗçсене Мускаври конференцире октябрь уйăхӗнче Молотов, Иден тата пирӗн Хэлл пуçласа янă. Каирпа Тегеранра эпир вăрçă ыйтăвӗсем çинчен çеç калаçмарăмăр, эпир малашнехи пурнăç çинчен те, çак вăрçăри мӗнпур жертвăсене тӳрре кăларма пултаракан мир туса хумалли плансем çинчен те калаçрăмăр».

«Каирти конференципе Тегеранри конференци,—тенӗ Рузвельт,—мана Чан Кай-ши генералиссимуспа тата Сталин маршалпа пӗрремӗш хут тӗл пулса калаçма, çав паранми çынсемпе юнашар ларма тата куçакуçăн курса калаçма май пачӗç».

Лăпкă океан çинчи вăрçă малашне мӗнле пырасси çинчен каласан, Рузвельт Чан Кай-ши генералиссимуса мухтанă. «Хальхи вăхăтра США-па Китай республики хăйсен туслăхне нихăçанхинчен те ытларах çирӗплетрӗç, вӗсен тӗллевӗсем пӗр пек иккенне палăртса хучӗç»,—тенӗ Рузвельт

«Вăсӗ кун хушши пӗр-пӗринне туслăн калаçса,—тенӗ малалла Рузвельт Тегеранри конференци çинчен,—эпир Германие хирӗç тумалли калама çук вăйлă наступлени мӗнпур пытăвӗсене тӗлӗшпе те калаçса татăлтăмăр. Вырăс çарӗ Хӗвелтухăç фронтӗнче наступлени туса пырӗ, союзниксем Италипе Африкăри çарӗсем Германие кăнтăр енчен хӗссе пырӗç. Америкăпа Англин йышлă çарӗсем ытти енсенчен тапăннă пирки, Германие пӗтӗмӗшпех хупăрласа илӗç».

«Тегеранри конференцире юлашки кунӗнче маршал Сталин, Черчилль тата эпӗ Германие парăнтарнă хыççăнхи кунсем, уйăхсем, çулсем çинчен калаçрăмăр. Германие унăн хăвачне туртса илесси çинчен эпир пурте пӗр пек шухăшлатпăр». «Англин, Российăн, Китайăн, Пӗрлешӳллӗ Штатсен тата вӗсен союзникӗсен халăхӗн вăйӗ хăйсен çӗр çинчи пӗтӗм халăхпа пӗрле çăмăр çине пӗрлешӳллӗ вăйпа çынсене малашне çыннӳ туханс. Çав тӗллевне питӗ вăйлăскерсем, «çынсене хăварасшăн пӗрле тăрашнă чухне нимӗнле агрессилле наци те çӗнӗрен пӗтӗм тӗнчери пурне те пăсса яма пултараймӗ. Анчах çав тапăнă державăн Германи, Азири, Африкăри тата Америкăри ирӗке калакан мӗнпур халăхсемпе пӗрлешсе, килӗштерсе ӗçлемелле. Вăйлисем вăйсăррисене пăхăнтарса тăрас йӗрке — вăл пирӗн тăшмансен йӗрки, эпир ăна йышăнмастпăр. Анчах çав вăхăтрах эпир çакăн пирки каласа татăлтăмăр: пӗтӗм тӗнчери мире сыхласа тăма вăй кирлӗ пулсассăн, пӗтӗм тӗнчери вăйпа эпир кирлӗ таранах усă курăпăр. Пирӗн политика çакăн пек (вăл тӗрӗс политика): кашни наци ирӗклӗх правине пысăкӗшӗ вăл хăй ирӗклӗхшӗн кӗрешме мӗн чухлӗ хатӗрринчен килмелле.

Паян эпир оккупациленӗ çӗршывсенчи куçа курăнман союзниксене—вăрттăн ӗçлекен группăсене тата ирӗке кăларассишӗн кӗрешекен çарсене саламлатпăр. Пирӗн çарсем Европăна пырса кӗрсен, çав куçа курăнман союзниксем пирӗн тăшмана хирӗç кӗрешес ӗçре калама çук пысăк вăй пулса тăрӗç».

Союзниксен пулас наступленийӗ фронтсенче те, тылра та пӗтӗм вăя тата шухăш-кăмăлсене мобилизацилеме хушни çинчен каласан, Рузвельт юлашкинчен çынсене раштав праçникӗ ячӗпе салам каланă, ырă суннă.

ИТАЛИРИ ВАРÇА ӖÇӖСЕМ

ЛОНДОН, декабрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Çурçӗр Африкăри çарӗсен штабӗ пӗлтернӗ тăрăх, вăйлă çумăр çуса тăнине пула Италири пӗтӗм фронт тăршшӗпех пысăк операцисем тума май пулман. Ортонь ре хаяр çапăçӳсем пыраççӗ. Тăшманран урам хыççăн урам тасатса пыраççӗ. Инди çарӗсем Виллагранде ятлă пункта тытса илнӗ. Çав çапăçусем вăхăтӗнче тăшмана пысăк çухату тӳстернӗ. Тыткăна илнисем пур

Америкăн 5-мӗш армийӗн центральнăй фронтӗнче союзниксен çарӗсем чи паха икӗ çӳллӗ вырăна тытса илнӗ.

ЮГОСЛАВИН ХАЛĂХА ИРӖКЕ КĂЛАРАССИШӖН КӖРЕШЕКЕН ÇАРӖН ӖÇӖСЕМ

ЖЕНЕВА, декабрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Югославирен илнӗ хыпарсем тăрăх, Югославин халăха ирӗке кăларассишӗн кӗрешекен çарӗ вăрçă пуçарулăхне вăрçă пыракан пур секторсенче те хăй аллинче тытса тăрать.

Хӗвеланăç Боснире Кладанье Живница хушшинче хаяр çапăçусем пыраççӗ. Санджакра Югославичаçӗсем малалла куçнă. Дувнопа Ливно секторӗнче те хаяр çапăçусем пыраççӗ.

ИТАЛИ ЫЙТĂВӖСЕМПЕ ӖÇЛЕКЕН КОНСУЛЬТАЦИ СОВЕЧӖН ӖÇӖСЕМ ÇИНЧЕН

АЛЖИР, декабрӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Итали ыйтăвӗсемпе ӗçлекен констультаци совечӗн 4-мӗшларăвӗ пулса иртнӗ май çакăн пек пӗлтерӳ пичетлесе кăларнă:

«Итали ыйтăвӗсемпе ӗçлекен консультаци совечӗн декабрӗн 24-мӗш кунӗнче Алжирта 4-мӗш ларăвӗ пулса иртнӗ. Ларура Гарольд Макмиллан председатель пулнă. Ларура çаксем пулнă: Совет Союзӗн представителӗ А. Я. Вышинский, Француз халăхне ирӗке кăларассишӗн кӗрешекен комитетăн представителӗ Р. Массигли, Пӗрлешӳллӗ Штатсен Роберт Мэрфи вырăнне (вăл çук пулнă пирки) представитель пулнă Рейнхардт господин. Совет Италири политикăллă тата экономикăллă лару-тăрăва сӳтсе-явнă. Çакăн хыççăн совет хăйӗн кулленхи ӗçӗсене сӳтсе-явнă».

Совет Союзӗн Египетри посланникӗ хăйӗн верительнăй грамотисене пани

КАИР, декабрӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). ССР Союзӗн Египетри посланникӗ Н. В. Новиков юлташ Фаруг короле хăйӗн верительнăй грамотисене панă. Верительнăй грамотăсене панă чухне ют çӗршыв ӗçӗсен министрӗ Нахас-паша пулнă.

ГЕРМАНИРЕ ПОРАЖЕНИЛЛӖ ШУХĂШ-КĂМĂЛСЕМ САРАЛНИ

ЖЕНЕВА, декабрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Нимӗçсен «Брюсселер цейтунг» ятлă фашистла хаçачӗ «поражени тӳсес шухăш-кăмăлпа чирленӗ нимӗçсене» тапăнать. Хаçат Германире пораженилле шухăш-кăмăлсем хăратмаллах сарăлма пултарассине палăртать, Германи «сывлăшне пăсакан çынсене чӗнмелле мар тумалли» мерăсем йышăнма хушать. Çавăнпа пӗрлех гитлерла хаçат «пораженецсене тымарӗпех пӗтерсе тăкма май çуккине» те йышăнать.

АНГЛИЕ КАНАДА ÇАРӖСЕН ÇӖНӖ ЙЫШӖ ПЫРСА ÇИТНӖ

ОТТАВА, декабрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Канадиен пресс агентстви пӗлтернӗ тăрăх, Англие Канада çарӗсен çӗнӗ пысăк йышӗ пырса çитнӗ.

ЯПОНИРЕ ШЫВ АЙӖНЧЕ ТУННЕЛЬ ТУНĂ

ТОКИО, декабрӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пӗлтернӗ тăрăх, декабрӗн 31-мӗшӗнче Хонсю утравӗ çинчи Симоносеки хулипе Кюнсю утравӗ çинчи Модзи хулине пӗрлештерекен шыв айӗнчи иккӗмӗш туннеле туса пӗтереççӗ. Çав тунелле виçӗ çул та 4 уйăх хушши тунă.

Гектартан 100-шер пăт тырă туса илессишӗн

КАНАШ. (Хамăр корр.). Иртемен Кушкăри «Чуваш ЦИК» колхоз иртнӗ çул, агротехника ӗçӗсене пурне те вăхăтра тата лайăх тунине пула, пысăк тухăçлă тырпул пухса илчӗ. Колхоз халь çитес çуракине тимлӗн хатӗрленет.

— Çитес çул эпир гектартан вăтам шутпа 100 пăтран кая мар тӗштырă пухса илесшӗн. çавăншăн кӗрешетпӗр,—тет колхоз председателӗ Федотов юлташ.

Вăрлăхсене лайăх сортласа хунă, вӗсем çинче пӗр пӗрчӗ çӳп те çук, вӗсен шăтаслăхӗ 96—99 процент шутланать.

Колхозра ӗç лаши 24. Начартарах лашасене лайăхрах апат çитереççӗ. Кашни ӗç лаши валлиех урапа, хăмăт-йӗнерчӗксем çителӗклӗ. Плугсене пурне те юсаса, çу сӗрсе лартнă. Сӳресене те çитес кунсенчех юсаса çитереççӗ.

Çуракине хатӗрленнӗ май 2-мӗш бригадăри колхозниксем хире тислӗк кăларас тӗлӗшпе 1-мӗш бригадăна ăмăртăва чӗннӗ. Ăмăртса ӗçлени ӗç тухăçлăхне хăпартрӗ. Паянхи куна 2-мӗш бригада хире 727 лав тислӗк кăларчӗ, 10 центнер фекали, 2 центнер кайăк-кӗшӗк тислӗкӗ, 5 центнер кӗл пухса хатӗрлерӗ. 1-мӗш бригадăри колхозниксем те кӗске вăхăт хушшинчех хире 750 лав тислӗк кăларчӗç, вырăнти удобренисем чылай пухса хатӗрлерӗç.

Çуракине тимлӗн хатӗрленеççӗ

ВАРНАР. (Хамăр корр.). Килес çулхи тухăçлă тырпулшăн кӗрешесси районра анлăн сарăлса пырать. «Ландыш» колхозра вăрлăхсене пӗтӗмпех сортласа хунă, ялхуçалăх машинисене юсаса пӗтерне. Халь кунта уя тислӗк кăлараççӗ, кӗл тата кайăк-кӗшӗк тислӗкӗ пухаççӗ.

«Гигант» колхозра çак кунсенче кăна 32 гектар çинче юр тытнă, уя 600 лав ытла тислӗк кăларнă, вăрлăхсене сортласа пӗтернӗ. Вăрлăхлăх 50 пăт пăрçана алăпа сортланă. Колхоз тимӗрçисем Скворцовпа Васильев юлташсем машинăсене хăвăрт тата лайăх юсаççӗ.

Молотов ячӗпе тăракан колхозра 362 центнер вăрлăх сортласа хунă, уя 2000 лав тислӗк кăларнă, ялхуçалăх машинисене те юсаса пӗтернӗ.

Нумай колхозсем халь юр тытса хăварас ӗçе пикенеççӗ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончӗсенче

Нимӗçсен фронтне татса кӗни

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, декабрӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС спецкорӗ). Ноябрьпе декабрь уйăхӗсем Днепрăн сылтăм енчи Украинăра нимӗç çарӗсене хирӗç питех те хаяррăн кӗрешнӗ уйăхсем пулчӗç. Украинăри пӗрремӗш фронт боецӗсем тăшманăн танкӗсемпе пехотин пысăк ушкăнӗсен вăйлă атакисене çирӗппӗн те паттăррăн сире-сире тăчӗç. Нимӗç командованийӗ кунта хăйӗн чи лайăх танковăй тата пехотнăй дивизийӗсене, Францирен, Германирен тата çавăн пекех Итали фронтӗнчен илсе килнӗскерсене, кӗртсе ячӗ.

Тăшман васкарӗ, вăл хăйӗн салтакӗсемпе офицерӗсене çухатма та, техникине çухатма та шеллесе тăмарӗ. Нимӗçсем пирӗн позицисене атакăлама пӗр вăхăтрах темиçе çӗр танк кӗртсе янă кунсем те пулчӗç. Вӗсем хушшинче «тигрсемпе» «пантерăсем» йышши танксем те пулчӗç. Пирӗн боевой йӗркесем çинче кунӗн-çӗрӗн темиçе вунă самолет явăнса çӳрерӗ. Вӗсем танксемпе пехотăна çул уçса пама тапаçланчӗç. Çапăçусен хаярлăхӗ енчен тата унта салтаксемпе çар техники ытла та нумай кӗртсе яни енчен пăхсан, нимӗçсен ноябрьпе декабрь уйăхӗсенчи атакисене çуллахи çапăçусемпе танлаштарма пулать.

Мӗнех-ха вара? Днепр геройӗсем çак питех те йывăр тӗрӗслеве тӳссе тухрӗç. Вӗсем гитлерла командованин планӗсемпе ӗмӗчӗсене сапаласа ячӗç. Противник хăйӗн нумай пин салтакӗсемпе офицерӗсене, пин танкне ытла, темиçе çӗр самолетне çухатнă, апла пулин те тӗп енсенче мар, иккӗмӗш черетри енсенче çеç кăшт кăна малалла куçма пултарчӗ. Нимӗçсем хăйсен юнӗпе чыхăнса ларчӗç. Киевски, Сумски, Прилукски, Нежински, Бахмачски, Пирятински тата ытти дивизисемпе полксен воинӗсем нумай кунсем хушши пынă çапăçусенче тăшмана лӳчӗркесе тăкрӗç, ăна çурма-çул çинчех чарă-чара лартрӗç.

Эпир шоссесем çинче, фронт çулӗсем çинче нимӗçсен персе çӗмӗрнӗ е çунтарса янă танкӗсене, тутăхма та ӗлкӗрейменскерсене, нимӗçсен юр çинче сапаланса выртакан салтакӗсемпе офицерӗсен виллисене, артиллери вучӗ тулласа тăкнă хăй тӗллӗн сӳрекен туппӗсене куртăмăр.

Çапăçу кунӗсенче кунта совет летчикӗсем мухтавлăн çапăçрӗç. Вӗсем нимӗçсен боевой йӗркисем çине, техники çине пӗр ывăнма пӗлмесӗр бомбăсем тăкрӗç. Декабрь уйăхӗн пӗр кунӗнче «Илюшин—2» ятлă эскадрильисем нимӗçсен 23 танкне çунтарса ячӗç.

Тăшман группировкине çапса аркатмалли вăхăт çитнӗ. Кунӗ тӗтреллӗ пулнă. Юр ирӗлнӗ. Тул çутăлма пуçласанах совет артиллерисчӗсемпе летчикӗсем пеме тытăннă. Артиллерипе минометсен канонади секундăран секундах вăйланса пынă. Пирӗн артиллеристсем тăшманăн огневой точкисене пӗтер-пӗтере тăкнă. Ун хыççăн нимӗçсен оборонин малти линийӗ çине, унăн малти линири укрепленийӗсем çине пеме тытăннă. Артиллеристсем хăватлăн пенипе тăшман пысăк çухату тӳснӗ, тăшман çав çухатăва тултарса ыма та ӗлкӗреймен. Нимӗçсен 25-мӗш дивизине çӗнӗрен илсе пынă пӗр маршевăй батальона темиçе минутăрах пӗтерсе тăкнă. Унăн блашкийӗсем хирсене тарса пӗтнӗ. Нимӗç офицерӗсем хăйсен салтакӗсене тытса чарма та вăй çитерейме.

Çил-тăвăллăн персе тăнă хыççăн совет пехоти малалла, Житомирски шоссен икӗ енӗпе «ура» кăшкăрса, темиçе вунă километр шăтарса кӗнӗ.

Кӗçӗн лейтенант Костюков ертсе пыракан взвод тăшман траншейине чи пирвай çӗмӗрсе кӗнӗ. Боецсем гранатăсемпе тата автоматсен вучӗпе нимӗçсене окопсенчен хăваласа кăларнă. Кăнтăрлачченех Н-ски часть Радомышль хулине тытса илнӗ, çак хулана нимӗçсем темиçе кун каярах çеç питех те пысăк çухатусем туса тытса илнӗччӗ.

Кăнтăрла иртсен вара çапăçăва совет танкисчӗсем кӗчӗç. Танксен колоннисем гитлеровецсем вырнаçнă вырăна шăтарса кӗчӗç те вӗсене унта вут-хӗмпе тата гусеницăсемпе пӗтер-пӗтере тăкрӗç. Нимӗçсен фронтне татса кӗнӗ хыççăн танксене çапăçăва кӗртни пӗр сехет иртсен, радио тăрăх çакăн пек хыпар илтӗмӗр: Совет Союз Геройӗсен Похватькопа Архиповăн экипажӗсем халăх пурăнакан темиçе пунктăн урамӗсене çӗмӗрсе кӗнӗ те унта нимӗçсен гарнизонӗсене çапса аркатнă.

Тепӗр кунне çапăçусем тăтах та хӗрсе пычӗç. Пирӗн пехота, танксемпе тата артиллерипе пӗрле çапăçса, тăшманăн çирӗплетнӗ позицийӗсене малалла атакăласа, ăнăçлăн малалла куçнă. Питех те вăйлă штурм туса, совет çарӗсем халăх пурăнакан пысăк пунктсене—Брусилова, Кочерсвăна, Корнина тата ыттисене те тытса илнӗ. Пирӗн пӗр часть питех те хăвăрттăн тапăнса пынине пула, Житомирски шоссе çине тухнă та каялла чакакан нимӗç войскисен çулне татнă. Совет полкӗсем пысăк трофейăсем, вăл шутра юрăхлă танксемпе орудисем чылай тытса илнӗ. Нимӗç салтакӗсемпе офицерӗсене нумайӗшне тыткăна илнӗ.

Тепӗр участокра наступленин пӗрремӗш кунӗнче нимӗçсен 200 салтакӗпе офицерне тыткăна илнӗ. Тыткăна илнисен хисепӗ кунсерен ӳссе пырать, çавăн пекех нимӗçсем енчен вилнисемпе аманнисен хисепӗ те, тăшманăн техникине пӗтерсе тăкнă хисеп те ӳссех пырать. Виçӗ кун хушши пынă наступленилле çапăçусенче Хӗрлӗ Çар чаçӗсем нимӗçсен 4 танковăй тата 6 пехотнăй дивизине çапса çӗмӗрнӗ. Тăшмантан ирӗке кăларнă çӗр çинче нимӗçсен персе çӗмӗрнӗ танкӗсен, автомашинисен, орудисен купи курăнса выртать. Пирӗн трофея командисем тăшмантан тытса илнӗ юрăхлă тупăсене, минометсене, пулеметсене, çарпа тӗрлӗ йышши транспорт машинисене шута илме аран-аран çеç ӗлкӗрсе пыраççӗ.

Çак виçӗ кун хушшинче Украинăн 150 хулипе ялне ытла ирӗке кăларнă. Фронт татах 40 километра çитиччен лерелле куçрӗ. Наступлени малалла пырать.

Н. МАРКОВСКИЙ.

Ответлă редакторăн заместителӗ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Шупашкар леспромхозӗ граждансемпе учрежденисене çакăн çинчен пӗлтерет. мастерской драночвăй участока хупнă, ун вырăнне Гаменски лесопункт туса хунă.

Атăл леш енчен уйрăм çынсемпе учрежденисене вутă кашни кунах параççӗ: Учрежденисен вутă илмешкӗн доверенность çырса памалла.

ШУПАШКАР ЛЕСПРОМХОЗӖ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителӗн — 4—26, парти пурнăç пайӗн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайӗсен 5—31, издательство конторин —0—23.

Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.

НТ 515